НАЦИ ЮХĂМĔСЕМ

# ЛĂПКĂ ПУРНĂÇ ÇĂЛКУÇĔ

**АНКОра ирттернĕ «çавра сĕтел» материалĕсем тăрăх Александр ИВАНОВ хатĕрленĕ**

Патшалăх ĕçĕнче, республикăн кулленхи пурнăçĕнче тĕрлĕрен халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнасси пысăк вырăн йышăнать. Анчах çак политикăра СССР пысăк çитменлĕхсем, татса паман ыйтусем нумай хăварнă.

Çавăнпа та Раççей тата Тутарстан демократиллĕ çĕршывсенчи пек халăхсене право çителĕклĕ парайман-ха. Реформăсем пуçланнă хыççăн шăпах çак енĕпе нумай ĕçлеме тиврĕ, мĕншĕн тесен цивилизаци йĕркине кĕнĕ обществăсенчи пек саккунсемпе усă курма тăрăшмалла, пĕр пек праваллă ирĕклĕ федерацинче ĕçлеме хăнăхмалла. Раççей территорине кĕнĕ май Тутарстан Республики федерацинчи пек нацисен йĕркипе пурăнать, унăн йывăрлăхĕсене тӳсет. Апла пулсан республика пач хăй ыйтăвĕсемпе кăна ĕçлеме пултараймасть, унăн пĕтĕм Раççейри пысăк реформăсен ĕçне хутшăнмалла, хутшăнать те.

Илер-ха, сăмахран, республика Президенчĕ М.Ш.Шаймиев федераци тăвас енĕпе сĕннĕ пуçарусене. Ăна пысăк хак парса «Тутарстан моделĕ» теме пуçларĕç. Анчах та пирĕн республика, хăйне евĕрлĕ регион пулнипе, уйрăмлăхсемпе те палăрать. Шăпах çакăнтан тухать наци ыйтăвĕсемпе Тутарстанра ĕçлеме кирли. Республикăн федераллă наци политикипе çыхăнса пыракан майсем, меслетсем, хатĕрсем тупмалла. Кунта республикăри влаç органĕсен халăхсем тахçантанпах килĕштерсе, кӳршĕллĕ, пĕрпĕрне хисеплесе, пулăшса пурăнма хăнăхнине çирĕплетесси тĕп вырăн йышăнать.

Вунă çул каялла нумай халăхлă общество епле кĕрлерĕ. Ун чухне халăхсен шухăш-туйăмĕ ӳсни чи малтан политикăллă ĕçе пырса тивнĕ, социаллă лару-тăрăва хĕрӳлентернĕ. СССР хăварнă чылай регионсенче çав хускану ăнăçлă вĕçленчĕ теме май çук.

Телее, Тутарстан çавăн пек хирĕç тăрусенчен хăтăлма пултарчĕ. Республика Президенчĕ рынока çемçен кĕмелли политикăна тытни çак ĕçре чи нумай пулăшу пачĕ, нацисен юхăмне кирлĕ пек йĕркелемелли майсем çуратрĕ. Тĕрĕс шухăшлама пултаракан вăйсем ӳссе пычĕç, хирĕç тăруран çăлăнчĕç, влаçсемпе ăнланулла ĕçлеме тытăнчĕç. Экстремистла ушкăнсенчен халăха уйăрни, малта пыракан наци идейисем тавра пĕрлешни Тутарстан халăхĕсен съездне, Пĕтĕм тĕнчери тутарсен конгресне ирттерме, тутарсен, республикăри ытти халăхсен наципе культура юхăмĕсене йĕркелеме май пачĕç.



Республикăра ку енĕпе чылайăшĕ ăнăçлă ĕçлерĕ. Вĕсене паян асăнмалла. Акă Хусанти нумай нациллĕ обществăпа политика центрĕн председателĕ Рифкат Газизов. Республикăри халăхсен форумне ирттерес ыйтăва вăл пуçарнă. Еврейсен юхăмĕн лидерĕ Леонид Сонц (вăхăтсăр пирĕнтен уйрălса кайнă) Тутарстан халăхĕсен съездне хатĕрлесе ирттерме нумай пулăшрĕ. Сагит Джаксыбаев тата Виктор Диц АНКО йĕркелес енĕпе нумай ĕçлерĕç. Республикăра наципе культура организацийĕсен пĕрремĕш лидерĕсем Ибрагим Ибрагимов, Рашит Имшаев, Герман Лисицын, Герман Мелентьев, Геннадий Муханов, Николай Степанцев; АНКО пĕрремĕш правленийĕн членĕсем Владимир Ганшу тата Манарбек Тлеулинов.

Пĕлетĕр, пирĕн республикăра нацисен ыйтăвĕпе ĕçлекен уйрăм ведомство çук. Çавăнпа та тĕллевлĕ программăсем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем патшалăх институчĕсен вăйĕсене пĕрлештерме тивĕçлĕ. Кунта Тутарстан Республикин Наципе культура организацийĕсен ассоциацийĕ (АНКО) тĕп вырăн йышăнать. Тĕрлĕрен нацисемпе, этноссемпе шăпах вăл ĕçлет, Тутарстан халăхĕсен съезчĕ палăртнă ыйтусене татса парать, халăхсен чĕлхи, культури, йăли аталантăр тесе тăрăшать. Республикăра икĕ чĕлхе патшалăх шайне кĕнĕ — тутар тата вырăс чĕлхисем. Анчах та халăхсем йышлă пурăнакан регионсенче вĕсем хăйсен чĕлхипе те хут ĕçне тума пултараççĕ, радио тата телекăларăмсем йĕркелеççĕ, вырсарни шкулĕсем уçаççĕ. Чĕлхене вĕренмелли курссем йăлана кĕчĕç. Тăван чĕлхепе, наци репертуарĕпе мероприятисем ирттереççĕ.

Вунă çул хушшинче АНКО тата унăн ретне кĕрекен организацисем сахал мар опыт пухрĕç. Çак малтанхи аталану тапхăрне вĕсем ăнăçлă иртрĕç.

Паян малалла мĕнле аталанмалли çинчен шухăшламалла. Лайăх виççен акă мĕн палăрать. Тутарстанра Наципе культура организацийĕсен ассоциацине халăхсене пĕрлештерекен пĕтĕм республикăри центр тăвас ыйтăва вĕçне çитиччен татса паман. Хăш-пĕр наципе культура организацийĕсем канмалли мероприятисене ирттернипе çырлахаççĕ. Вĕсен вăйĕсем пĕрлешмен. Тутарстанри нимĕççен автономийĕ кăна паян пĕтĕм регионти организаци пек ĕçлет. Ыттисем пирки çапла калама май çук.

Паян, тĕрĕсрех каласан, ĕнер тата виçĕмкунах Наципе культура организацийĕсем хăйсене пĕтĕмпех çителĕклĕ тивĕçтерме кирли çинчен ыйту çĕкленĕ. Кашни организацин пултаруллă çынсем, методика, пурлăх, укçа-тенкĕ хăйĕн пулмалла. Ку енĕпе нимĕççем, еврейсем, узбексем кăна тĕслĕх кăтартаççĕ. Хуласенче тата районсенче АНКО пек организацисем çукки унта бюджетсенчен пулăшу илме чăрмантарать. Çырчаллинчи тĕслĕхе е урăххине йышăнса аталанма пулать.

Час-часах влаç пулăшни укçа панипе пĕтет. Анчах та ку енĕпе тĕрлĕрен меслетсем нумай. Укçасăр пӳлĕмсем, транспорт уйăрса пама пулать. Артистсем валли костюмсем те кирлĕ, мероприятисем ирттерме пулăшни... Ведомствăсемпе пĕрле ĕçлемелле. Пĕр сăмахпа, пулăшу пур енлĕ пулма пултарать. Анчах та активлăх, пуçарулăх кирлĕ.

Пурте пĕрле тăрăшса ĕçлесен наци ыйтăвĕсене татса парас ĕçре ăнăçлăх çуралать.

**Сăнӳкерчĕкре: туслăх савăнтарать.**

# ТУСЛĂХРА ПИРĔН ВĂЙ



***Çак кунсенче «Сувар» редакцийĕнче Тутарстан Республикинчи Чăваш наципе культура автономийĕн канашĕн членĕсемпе хаçат коллективĕн пĕрлештернĕ канашлăвĕ иртрĕ.***

Автономи канашĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тата малашнехи планĕсем çинчен унăн председателĕ К.Г.Яковлев каласа пачĕ. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, халĕ ЧНКА канашĕн тĕп ĕçĕ — районсенчи чăваш организацийĕсене йĕркелесе, аталантарса ярасси. Аксу, Алексеевски, Элмет, Пăва, Çĕпрел, Чистай, Павлă, Çарăмсан районĕсенче тата Хусанта конференцисем ирттерсе чăваш наципе культура центрĕсене йĕркелесе янă ĕнтĕ. Анчах, шел пулин те, Константин Геннадьевич шухăшĕпе, чăваш культурине аталантарас тĕлĕшпе ытти районсенче çителĕклех ĕçлемеççĕ.

— Эпир хула тата республика кунне паллă тунă çĕре те хастар хутшăнатпăр, — терĕ Константин Геннадьевич. — Малашне те ку ĕçе пирĕн тĕплĕн туса пымалла, Тутарстанри пĕр уява та чăвашсемсĕр ирттермелле мар. Тутарстан тата Чăваш Республикин президенчĕсемпе М.Шаймиевпа тата Н.Федоровпа малашне тачă çыхăнусем тытса пырасса шанас килет.

Тутарстанри чăвашсем 2002 çулхи сентябрь уйăхĕнче Шупашкарта иртнĕ ЧНК V съезчĕн ĕçне хастар хутшăнчĕç. Ноябрьте «Чăваш пики» конкурс иртрĕ. Эпĕ «Сувар» редакцине ЧНКА ĕçĕсене хаçат страницисенче çутатса тăнăшăн тав тăватăп.

Декабрь уйăхĕнче эпир Чăваш федераллă наципе культура автономийĕн II съездне хутшăнтăмăр.

2003 çул, ман шутпа, çăмăлах пулмасть. Мĕншĕн тесен автономи канашĕн пур членĕсем те çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Кăçалхи март уйăхĕн пуçламăшĕнче эпир Тутарстанри чăвашсен конференцине ирттерсе вĕсен вырăнне активлă, чăваш культуришĕн чăннипех çунакан çынсем суйласшăн. Ун чухнех республикăри чăвашсен культурăпа вĕренӳ ассоциацине тата усламçăсен ассоциацине йĕркелесе ярасшăн.

«Чи лайăх чăваш чĕлхипе литератури учителĕ», «Чи лайăх художник», «Чи лайăх журналист» тата ытти конкурссем ирттермелле.

Пире Тутарстан телевиденийĕнче чăваш кăларăмĕ кирлĕ. Ку тĕлĕшпе ĕçлеме пирĕн майсем пур.

ЧНКА канашĕн планĕнче — Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушки ялĕнче чăваш çамрăкĕсен фестивальне ирттересси. Малашне вара кунта эпир ĕçпе кану лагерĕ, техникум йĕркелесе яма шутлатпăр.





ЧНКА ревизи комиссийĕн председателĕ В.Н. Егоров автономи лидерĕн анлă планĕсене ырларĕ. Анчах та вĕсене пурнăçа кĕртес тесен пурин те пĕрле алла-аллăн тытăнса ĕçлемеллине астутарчĕ.

И.Л.Колесников усламçă чăваш культурине аталантарасси ентешсенче чăвашлăх туйăмĕ пулнинчен нумай килни çинчен каларĕ.

«Сувар» хаçатăн тĕп редакторĕ пулса ĕçленĕ Н.М.Сорокин ЧНКА планĕсене ырларĕ.

«Сувар» редакцийĕн ĕçĕ çинчен тата малашнехи планĕсем çинчен унăн тĕп редакторĕ А.К.Иванов хыпарларĕ.

«Сувар» хаçат халĕ Тутарстанра пурăнакан чăвашсем хушшинче чăн-чăн авторитет çĕнсе илме пултарчĕ. Ăна халĕ пĕтĕмĕшле илсен ултă пине яхăн чăваш çырăнса илет. Кашни районтах тенĕ пек хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕсем пур. Редакцие килекен çырусен шучĕ те çулсеренех ӳссе пырать.

— Хаçатра пичетленсе тухакан материалсен шайĕ те, редакци сотрудникĕсен ăсталăхĕ те ӳснине палăртмалла, — терĕ тĕп редактор. — Паян ун страницисенче политикăллă, социаллă-экономикăллă, общество пурнăçне сăнласа паракан статьясемпе паллашма пултараççĕ вулакансем. Тĕрлĕ районсенчи, ытти регионсенчи чăвашсен пурнăçĕ çинчен калакан материалсем те сахал мар пичетленеççĕ. «Сувар» çумĕнчи «Çунатлă çамрăклăх», «Шăнкăрав» хушма кăларăмсем вăй илсе пыраççĕ, пирĕн пурнăçри çивĕч ыйтусене çутатса пама тăрăшаççĕ. Анчах та аталанмалли, паллах, яланах пур. Ку тĕлĕшпе «Сувар» коллективĕн пухăвĕнче хаçатăн тематикăллă тата графикăллă модельне çĕнетсе анлăлатасси çинчен йышăну турăмăр,— терĕ вăл.

«Сувар» фотокорреспонденчĕ, çак йĕркесен авторĕ Н.С.Степанцев «Сувар» хаçат тата ЧНКА пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлесен пирĕн пĕрлехи çитĕнӳсем тата та пысăкрах пуласси çинчен каларĕ. Автономи канашне çамрăксем ытларах килни унăн пĕтĕмĕшле ĕçне çĕнĕ аталану панине палăртрĕ.

Хусанти П.Хусанкай ячĕллĕ ЧНКЦ активисчĕсенчен пĕри Алексей Никифоров 2005 çулта Хусан 1000 çул тултарнине паллă тăвасси çинчен сăмах тапратнă май ку ĕçе чăвашсен те активлăн хутшăнмалли çинчен каларĕ. Мĕншĕн тесен тахçан Хусан та чăвашсен тĕп хули пулнă.

— Ку тĕлĕшпе «Сувар» страницисенче материалсем тăтăшах тухса пыраççĕ, анчах та ку ĕç тĕплĕнрех пултăр тесе эпĕ хаçатра «Чăвашсем Хусанта» ятарлă рубрика уçма сĕнетĕп, — терĕ вăл.

**Николай СТЕПАНЦЕВ.**

**Автор сăнӳкерчĕкĕсенче: канашлу; «Сувар» хаçатăн тĕп редакторĕ А.К. Иванов; ТР ЧНКА канашĕн председателĕ К.Г.Яковлев.**